Никифоров Геронтий Лукиянович
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ,
РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ
"Чăваш наци конгресĕ"МОО
Шупашкар хули, Чăваш Республики

ТĂВАН ЧĔЛХЕ – АЧАН ĂС-ХАКĂЛĔПЕ ШУХĂШ-КĂМĂЛНЕ АТАЛАНТАРАКАН ВИТĔМЛĔ ХĂВАТ

Аннотаци. Автор статьяра тăван чĕлхе, чăваш чĕлхи ачан ăс-хакăлне аталантарма, ĕмĕт-туйăмне пуянлатма витĕм паракан хăват пулнине кăтартнă. Чăваш чĕлхи шкулта вĕрентмелли предмет, пĕлӳ хатĕрĕ пулнипе ача ăна вĕренсе хăйĕн пĕлевне ӳстерет, чĕлхе саккунĕсемпе паллашса тĕрĕс шухăшлама, çырма вĕренет. Шкулта вĕренекен ача харкамлăхне йĕркекелес ĕçре тăван чĕлхе пысăк вырăн йышăнать. Автор çыру ĕçĕнче ачан харкамлăхне йĕркелеме пулăшакан тĕп мелсене пăхса тухнă. Вăл пайăн-пайăн: ăс-тăнпа ăс-хакăл аталанăвĕ; кăмăл-сипет воспитанийĕ; культурăпа, йăла-йĕркепе паллашни; илемлĕх аталанăвĕ; хутшăну; тăван чĕлхе пĕлӳ илме тата пурнăçра ăнăçупа ӳсĕм тума пулăшни; çичĕ пил мелсене уçса панă. Кашни мел пĕлтерĕшĕпе пахалăхне ăнлантарнă хыççăн пĕтĕмлетӳ тунă. Уйрăмах ачана пурнăçра хăй вырăнне тупма, тĕрĕс пурăнма, çĕршыва юрăхлă çын пулма И.Я. Яковлев чăваш халăхне панă халал пехилĕсене, Г.Н. Волков этнопедагог ăс панисене тата çичĕ пил витĕмлĕ хăватсем пулнине статьяра палăртсах каланă.

Тĕп сăмахсем: тăван сăмах, ăс-хакăл, шухăш-кăмăл, харкамлăх, аталаену, кăмăл-сипет, йăла-йĕрке, илемлĕх, пил, халал.

Никифоров Геронтий Лукиянович
заслуженный учитель Чувашской Республики,
почетный работник общего образования РФ
МОО «Чувашский национальный конгресс»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

РОДНОЙ ЯЗЫК КАК ФАКТОР КОГНИТИВНОГО И ИНТЕЛЛЕКТУАЛЬНОГО РАЗВИТИЯ РЕБЁНКА

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Аннотация: *в статье автор показал, что родной — чувашский — язык представляет собой силу, способствующую развитию интеллекта и обогащению воображения ребёнка. Поскольку чувашский язык является одновременно предметом и средством обучения в школе, ребёнок, изучая его, расширяет свои знания, знакомится с языковыми законами, учится правильно мыслить и писать. Большую роль в формировании личности школьника играет родной язык. Рассмотрены основные способы формирования личности ребёнка: умственное и духовное развитие; нравственное воспитание; знакомство с культурой и традициями; художественное развитие; общение; роль родного языка в получении знаний и достижении успеха и прогресса в жизни; раскрыл семь благословений. После разъяснения значения и качества каждого средства был сделан вывод. В частности, автор подчеркнул, что для того, чтобы ребёнок нашёл своё место в жизни, жил правильно и был достойным гражданином своей страны, действенную силу имеют завещание И. Я. Яковлева чувашскому народу и наставления этнопедагога Г. Н. Волкова, а также семь заповедей.*

Ключевые слова: *родное слово, разум, мысль, собственность, развитие, нравственность, традиция, красота, благословение, завещание.*

Тăван сăмах, тăван чĕлхе ачан ăс-хакăлне аталантарма, ĕмĕт-туйăмне пуянлатма вăй-халпа хăват парса тăрать. Чăвашсен паллă вĕрентекенĕ Геннадий Волков ăсчах тăван чĕлхене пысăк хак панă. «Чи кирлĕ, чи хисеплĕ предмет вăл – тăван чĕлхе. Унта Тăван çĕршыв, пурнăç, тăван халăх, унăн ĕмĕчĕ, телейĕ. Ĕмĕр пурăн Тăван çĕршывра, ĕмĕр вĕрен тăрăшса тăван чĕлхене», – тенĕ вăл. Чăнах та, тăван чĕлхене тăрăшса вĕренсе ача пĕлӳ илет, ăс пухса çын пулать.

Чĕлхе – чăваш халăх пуянлăхĕ. Ку чĕлхепе пирĕн çĕршывра пĕр миллион ытла çын калаçать. Вăл кулленхи калаçу чĕлхи çеç мар, радиопа телевидени, хаçат-журнал, кĕнеке чĕлхи те.

Тăван чĕлхе ĕмĕр-ĕмĕр ламран лама куçса пырса паянхи куна упранса юлнă. Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн сăвă йĕркисем аса килеççĕ: «Чĕлхем!

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Санпа тĕнче уççи тытатăп, шухăшлама вĕрентрĕн эс мана». Чăнах та, тăван чĕлхене пĕлни ытти чĕлхесене вĕренме, нумайрах пĕлӳ илме пулăшать.

Тăван чĕлхене вĕрентесси – питех те яваплă та пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Учитель кулленхи ĕçре тăван чĕлхене вĕрентсе ачасене пĕлӳ панисĕр пуçне воспитани ĕçне те тăвать. Тăван чĕлхене шкулта вĕрентнĕ чухне вăл ун тĕп пĕлтерĕшĕсене шута илет. Тăван чĕлхен тĕп пĕлтерĕшĕсем:

– чăваш чĕлхи пирĕн республикăра вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи шутланать;

– чăваш чĕлхи вăл – шкулта вĕрентмелли предмет – пĕлӳ хатĕрĕ;

– чăваш чĕлхи – шухăшлав хатĕрĕ;

– чăваш чĕлхи -тăван чĕлхе – çынсене пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр;

– тăван чĕлхе пурнăçа ăнланма, çут çанталăка, тавралăха пĕлме, ăс-хакăла ӳстерме вĕрентет;

– чăваш чĕлхи чăваш халăх тенинех палăртать.

Тăван чĕлхене вĕренсе шкул ачи хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсе пырать, уроксенче чĕлхе саккунĕсемпе паллашни ăна тĕрĕс шухăшлама, çырма вĕрентет. Çавăнпа пĕрлех вĕрентӳре ачасен калаçăвĕ тата çыру хăнăхăвĕ аталанать, тавра курăмĕ те ӳсет.

Ачан ăс-пуç аталанăвĕ те тăван чĕлхепе çыхăннă. Унăн ăс-хакăлĕ хăй таврашĕнчи япаласене, тавралăхпа тĕнчене пĕлнипе пуянланса пырать. Вĕренекен харкамлăхне (уйрăм çын, личность) йĕркелес ĕçре тăван чĕлхе пысăк вырăн йышăнать. Харкамлăха йĕркелеме пулăшлакан тĕп мелсем:

1. Ăс-тăнпа ăс-хакăл аталанăвĕ. Хальхи вăхăтра кашни ача шкулта вĕренсе ăс пухать. Тĕрлĕ предмета вĕренсе пĕлĕве ăша хывать, ăс-тăна аталантарать. Паянхи кун шкулта ачасем тĕпрен илсен виçĕ чĕлхе вĕренеççĕ. Паллах, темиçе чĕлхе пĕлни ачана лайăрах шухăшлама пулăшать. Вăл ăнлавсене танлаштарма, тишкерме, пĕтĕмлетме, сăлтав-йĕр çыхăнăвĕсене йĕркелеме вĕренет. Ачасен ăс-хакăлне аталантарма вăйă саманчĕсем ирттерни, пуçватмăшсемпе ĕçлени, сăвăсемпе юрăсем, ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, тупмалли юмахсем вĕренни пулăшать. Урокра илемлĕ текстпа ĕçлени, курăмлă тата валеçмелли

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

материалсемпе, тăван чĕлхепе тухакан хаçат-журналпа, чăвашла куçарнă мультфильмсемпе усă курни уйрăмах пысăк пулăшу параççĕ.

Вырăссен паллă вĕрентекенĕ Константин Дмитриевич Ушинский çапла каланă: «...тăван сăмах вăл – кирек мĕнле ăс-тăн аталанăвĕн никĕсĕ тата мĕнпур пĕлӳ мулĕ, унран кирек мĕнле ăнлану та пуçланать, ун витĕр тухса вăл ăс-тăна таврăнать». Чĕлхе пулăшнипе ачасем чăваш халăх историйĕпе, культурипе, пурнăçĕпе паллашаççĕ, литература хайлавĕсене вулаççĕ, тишкереççĕ, юрри-сăввине итлеççĕ, юрлаççĕ, хамăр таврари çут çанталăка та, общество аталанăвĕн туртăмĕсене те тарăнрах ăнланма тытăнаççĕ.

2. Кăмăл-сипет воспитанийĕ. Ача çынсене, çут çанталăка сăнаса ӳсет. Вăл çитĕнсе пынă май ашшĕ-амăшĕнчен, аслашшĕ-асламăшĕнчен, кукашшĕ-кукамăшĕнчен, çывăх тăванĕсенчен, кӳршисенчен, аслисенчен, шкулта учительсенчен, паттăр çынсенчен ырă тĕслĕх илсе вĕсем пек пулма вĕренет. Ача хутшăнура тус-юлташ хушшинче тыткаламалли йĕркесене тата кăмăл-сипет хаклăхĕсене ăса хывать, ырă кăмăллă пулма, ваттисене хисеплеме вĕренет, ырăпа усала, лайăххипе япăххине уйăрса илме хăнăхать.

3. Культурăпа, йăла-йĕркепе паллашни. Чĕлхере мăн асаттесен пурнăç опычĕ, йăли-йĕрки, ăс-хакăлĕ, пуян историйĕ упранса юлнă. Тăван чĕлхе пулăшнипе ача пурлăх культурипе (çын хăй аллипе тунă япаласемпе, таврари çуртсемпе, техникăпа тата вĕсен ячĕсемпе) тата ăс-хакăл культурипе (йăла-йĕркепе, уявсемпе, илемлĕ литературăпа, фольклорпа, искусствăпа) паллашать, ăша хывать, вĕсене уйăрма вĕренет. Вĕреннĕ хушăрах ача тăван халăх историйĕпе, ырă йăли-йĕркийĕпе, кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе, юрри-сăввипе, юмахĕ-халапĕпе паллашса пырать.

4. Илемлĕх аталанăвĕ. Тăван чĕлхене вĕренни илем ăнлав-туйăмне йĕркелеме пулăшать. Уйрăмах çут çанталăк çинчен çырнă сăвăсене, калавсемпе повеçсенчи тăван тавралăха сăнлакан вырăнсемпе паллашни ачана илеме асăрхама, туйма тата ăна хаклама пулăшать. Тĕслĕх валли Иван Ивникĕн «Тул çутăлать» сăввине илер.

Çăлтăрсем сӳнеççĕ

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ерипен, тирпейлĕн,
Уйăх шурса çитрĕ
Çӳллĕ тӳпере.
Халĕ çĕкленес пек
Вашават хĕвелĕ
Тухăçа илемлĕн
Çулăм ӳкерет.
Улăхра шăрçа пек,
Кĕмĕл-мерченĕн
Чăмăртанчĕ сывлăм -
Çакăттăм мăя.
Эреветлĕ шăпчăк
Уншăн хĕпĕртенĕ,
Эх, юри-çке уççăн
Чӳхенсе каять...
Пахчари шап-шурă
Çеçке çурнă çĕмĕрт,
Ĕç çине васканăн
Ыйхине сирет.
Вăл та пĕлет пулĕ
Чаплă пирĕн ĕмĕр,
Хапăллатпăр эпĕр
Çак хавас ире.

1934

Çак йĕркесене вуласан ача куçĕ умне тул çутăлни, ирхи пĕлĕт, улăх, пахча сăнарлăрах, асра юлмалла тухса тăрать. Çут тĕнче вăранни, унăн илемĕ ача чĕринче ырă кăмăл-туйăм хускатать. Вăл шухăш-кăмăл вĕçевĕпе чуна çывăх тăван таврана лайăхрах хаклама пуçлать. Чăн каланă Иван Яковлев: «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн мĕн пур тĕнче курăмне тăван чĕлхе чун парать».

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Илемлĕхе ăнланма юрлама, ташлама, музыка инструменчĕсем калама пултарни те пулăшаççĕ. Ачасем музыка, ташă урокĕсенче илемлĕхе туйма туллинрех вĕренеççĕ.

5. *Хутшăну*. Чĕлхе – хутшăну хатĕрĕ. Ача мĕн пĕчĕкрен аслисемпе хутшăнма, ваттисене хисеплеме, кĕçĕннисемпе çепĕç пулма вĕренет. Тăван чĕлхене пĕлнипе ача çынсемпе ирĕклĕ калаçма, хăйĕн шухăшне палăртса калама тата çынсен калаçнине ăнланма пултарать. Çакă вара тантăшсемпе çыхăну йĕркелеме, хутшăнусене аталантарма, вăйăсене туслă выляма тата ачана йышра хăй вырăнне тупма пулăшать. Чăвашла калаçса хутшăнни ачасене чăн-чăн пĕр танлăхпа туслăх туйăмне вăйлатма, тантăшсем хушшинче хăйне еплерех тыткаланине пăхса хаклама хăнăхтарать.

6. *Тăван чĕлхе пĕлӳ илме тата пурнăçра ăнăçупа ӳсĕм тума пулăшни*.

Тăван чĕлхене вĕренни, пĕлни шкулта ăс пухма, аслă шкулта вара филологи факультетĕнче чăваш чĕлхипе литератури специальноçа алла илмелли ятарлă хатĕр шутланать. Вăл ачана, студента вĕренӳ материалне çăмăлрах ăша хывма, хăнăху ĕçĕсене ăнланма, вĕсене хăй тĕллĕн пурнăçлама пулăшу парать. Унсăр пуçне аслă пĕлӳ илнĕ çамрăка вăл ĕçре хăвăрт ӳссе пымалли çула уçать.

7. *Çичĕ пил*. Чăваш этнопедагогикинче ачасене пăхса ӳстерессин *çичĕ тĕсне* палăртаççĕ. Вĕсене çамрăк ăрăва хисепе тивĕçлĕ тата телейлĕ çынсем тăвас тĕллевпе ырă сунса, вĕрентсе каланă *çичĕ пил* теме пулать [2, с. 70]. Вĕсем çаксем:

1) ачасене ĕçе хăнăхтарасси;

2) ачасене йĕркеллĕ, кăмăл-туйăмлă пулма вĕрентесси;

3) ачан ăс-тăнне аталантарасси;

4) илемлĕхе ăнланма вĕрентесси;

5) вăй-хала ӳстерме хăнăхтарса пырасси, сывлăхлă пуласси;

6) ачасене перекетлĕ пулма хăнăхтарасси;

7) харпăр хăйне тытма вĕрентесси.

Çичĕ пил – паянхи пурнăçра çамрăксемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ ырă сунăм. Ăна ачасене сывлăхлă çитĕнме пулăшакан, малашне пурнăçа йĕркелеме вĕрентекен ĕçсемпе тĕллевсен планĕ, программи теме пултаратпăр. *«Çын çичĕ*

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пиллĕ пулсан телейлĕ», – тенĕ чăвашсем. *Çичĕ пилпе* килĕшӳллĕ пурăнакан çынна пур енчен те лайăх çын тесе шутланă. Çавăнпа вăл чыспа хисепе тивĕçлĕ çын пулнă. Тĕнчипе паллă академик, публицист писатель Геннадий Волков ачасене пăхса ӳстересси çинчен вĕрентекен ăслăлăха – халăх педагогикине – никĕсленĕ. Геннадий Никандрович чăваш культуринче «çичĕ пил» ăнлав пуррине хăйĕн ĕçĕсенче, уйрăмах «Чăваш этнопедагогики» кĕнекинче çирĕплетнĕ. Сумлă вĕрентекен тĕрлĕ ӳсĕмри шкул ачисене халаллана «Кил илемĕ», «Асанне калавĕсем», «Юманпа хĕвел» кĕнекесен никĕсне халăх педагогикине хывнă. Кĕнекесенчи калавсемпе юмахсем çитĕнекен ăрăва тӳрĕ те ырă чунлă пулма, тăванлăхпа туслăха упрама, кăмăл çĕкленĕвĕпе чун хастарлăхне çирĕплетме, кил-йышпа лайăх пурăнма, ваттисене хиселеме, ĕçе юратма вĕрентессипе палăрса тăраççĕ. Г.Н.. Волков çамрăк ăрăва пиллесе çапла ăс панă: «Чăвашсем мĕн авалтан ачасене: Çын пул! – тесе вĕрентнĕ, апла пулсан, тăванăмсем, килтен тухсан – кил ятне, чăвашран тухсан чăваш ятне çĕртер марччĕ. Çапла пултăр!» [3, с. 269].

Владимир Иванов, педагогика наукисен кандидачĕ, профессор Геннадий Волковăн «Кил илемĕ» кĕнекине пысăк хак панă: «Кил илемĕ» – асамлă кĕнеке.... Кĕнеке никĕсне халăх педагогикин тытăмĕсене хывнă. Çав вăхăтрах автор çамрăк вулакансем çинчен те манса кайман. Çавăнпа ĕнтĕ юмахсем кăна мар, калавсемпе очерксем те ансат сюжетлă, ăнланмалла çăмăл чĕлхеллĕ. Ачасемшĕн «Кил илемĕ» – ăса вĕрентекен, пурнăçăн тĕрлĕ енĕсене тата тӳнтерĕсене уçăмлатакан кĕнеке» [1, с. 4].

Чăваш кил-йышĕнче ачана мĕн пĕчĕкрен, виçĕ çултах ĕçлеме, ашшĕ-амăшне, аслашшĕ-асламăшне пулăшма хăнăхтарса пынă. Ачасем, паллах, ашшĕ-амăшне пур ĕçре те пулăшнă. Хальхи вăхăтра та чăвашсем ачасене ĕçе хăнăхтарса ӳстерессине тĕпе хураççĕ.

«Çын çичĕ пиллĕ пулсан, вăл çичĕ ют пулсан та, – тăван», – тенĕ ĕлĕкех чăвашсем. Çамрăк ăрăва тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе çын тăвас ĕçе кăмăл сипетпе сапăрлăх, сывлăх, ырă кăмăллăх кĕнĕ. Çак пахалăхсем пĕтĕм этемлĕхшĕн пĕлтерĕшлĕ. И.Я. Яковлев *«Чăваш халăхне панă халара»* туслăхпа килĕшĕве, Тăван çĕршыва юратнине, çирĕп çемьепе, тĕрĕс пурăннине, ӳкĕте кĕнине, ĕçе

Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

юратнине, тӳрĕлĕхе, сăпайлăха палăртать. Аслă вĕрентекен чăвашсене ырă суннă: «Эпĕ туса пĕтереймен ĕçсене эсир туса пĕтерĕр», – тенĕ [4, с.3].

Халалти шухăшсене, пехилсене ачасен чунне хывма вĕсемпе ĕçченлĕх, туслăх, ырăлăх, тасалăх, тӳрĕ кăмăллăх çинчен калаçни, пысăках мар ăслав ĕçĕсем çыртарни питех те пĕлтерĕшлĕ. Шкулта воспитани ĕçне шăпах Иван Яковлев халалне, Геннадий Волковăн ăс панисене тата *çичĕ пиле* тĕпе хурса туса пыни ачасене чăн-чăн çын пулма вĕрентсе ӳстерме пулăшакан тĕп мелсенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ.

Список литературы

1. Волков, Г. Н. Кил илемĕ: калавсем, юмахсем, очерксем. Иккĕмĕш тӳрлетнĕ кăларăм / Г. Н. Волков. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2017. – 127 с.

2. Енькка, Е. Тăван ен: Чăваш халăхĕн XVI-XIX ĕмĕрсенчи пурлăхпа ăс-хакăл култури: Вĕренӳ пособийĕ, 6–7-мĕш классем валли / Е. Енькка. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2008. – 240 с.

3. Иванов, Н. Г. Тăван литература: Вĕренӳпе вулав кĕнеки. 6-мĕш класс валли / Н. Г. Иванов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. – 287 с.

4. Яковлев, И. Я. Чăваш халăхне панă халал – Завещание чувашскому народу / И. Я. Яковлев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2023. – 8 с.

Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)